# Тӑван тавралӑх
# - вӑл тупра, эс ӑна юрат упра!

хулари ИКТпа усӑ курса

ирттернӗ уроксен конкурсӗнче

чӑваш чӗлхипе

6-мӗш класра панӑ урокӑн анлӑ планӗ

Урока ирттерекенӗ:

**Васильева Оксана Георгиевна,**

38-мӗш шкулти пӗрремӗш категориллӗ

чӑваш чӗлхи вӗрентекенӗ

Шупашкар, 2019

**Урок теми:** ***Тăван тавралăх-***

***вăл тупра, эс ăна юрат, упра!***

**Урок тĕсĕ:** ИКТпа усă курса ирттернĕ хутăш урок.

**Сапăрлăх тĕллевĕсем:** Тăван тавралăха сăнама, юратма, упрама вĕрентесси.

**Пĕлӳ тĕллевĕсем:** Пуплевре тата çырура япала ячĕсемпе тĕрĕс усă курассине çирĕплетесси, тăван тавралăх**,** çут çанталăк çинчен çыхăнуллă каласа пама хăнăхтарасси.

**Аталантару тĕллевĕсем:** Çыхăнуллă пуплеве, шухăшлава, тимлĕхе, илемлĕ те тĕрĕс вулав хăнăхăвĕсене аталантарасси, сăмах йышне устересси.

**Усă курнă технологисем:** информаципе хутшăну технологийĕсем, сывлăха сыхлас технологисем, проблемăллă тата аталантару технологийĕсен элеменчĕсем, ушкăнра хутшăнса ĕçлесси.

**Ĕç мелĕсемпе меслечĕсем:** ыйту-хурав, учитель сăмахĕ, калаçу, шырав-тĕпчев, хăнăхтарăва çырса пурнăçлани, проблемăллă ыйтăва хуравлани, тишкерӳ-пĕтĕмлетӳ, çурма сасăпа, саспа вуласси, суйлавлă вулав, илемлĕ вулав, мăшăрсенче, ушкăнсенче ĕçлесси, диалог тăвасси, сюжетлă ӳкерчĕксемпе, валеçӳ карточкисемпе усă курни, слайдсемпе ĕçлени (çĕнĕ материалпа паллашасси, грамматика материалĕпе ĕçлесси, ушкăнсенчи ĕçе йĕркелесси).

**Пуплев хăнăхăвĕсем:** сасăсене тĕрĕс илтесси, пĕр-пĕрне ыйтусем парас, хуравлас хăнăхусене аталантарасси, палăртулă вулав, сăмах йышне пуянлатасси, çĕнĕ сăмахсемпе усă курса çыхăнулă пуплеве аталантарасси.

**Чĕлхе теорийĕ:** япала ячĕсемпе калаçу тата çыру пуплевĕнче тĕрĕс усă курасси.

**Курăмлăх хатĕрĕсем:** компьютер, проектор, экран, магнитофон, кĕнекесен выставки, темăпа хатĕрленĕ слайдсем, укерчĕксем, çилĕм, сăрăсем, хут, учебник;

Ачасем урокра ушкăнсемпе ĕçлеççĕ. 3 ушкăна уйăрнă: 1-мĕш ушкăн – 4 ача, 2-мĕш ушкăн – 4 ача, 3-мĕш ушкăн – 4 ача.

**Усă курнă литература:** 1. И.А.Андреев, Р.И.Гурьева. Чăваш чĕлхи: Вырăс шкулĕн 6-мĕш класĕнче чăвашла вĕренмелли кĕнеке. – Ш., 2005.

2. Андреев И. А. Чăваш чĕлхи. Вырăс шкулĕсенчи I – IX классен программи. – Ш., 2004

3. М.М.Павлова. Хăнăхтару пуххи. Ш., 2009. «Çĕнĕ вăхăт».

4. Гордеева Н.Ю., Иванова И.А., Карсакова В.И. Вĕрентекенĕн ушкăнпа ĕçлес ĕçе йĕркелени ăсталăхĕ. Ш., 2011.

**Урок юхăмĕ.**

**I. 1.Класа урока йĕркелени.**

- Ырă кун пултăр, ачасем!

- Ырă кун пултăр, Оксана Георгиевна!

Шăппăн ларăр, шăппăн ларăр

Урок пырать ку класра.

Эп çыратăп, эп вулатăп

Калаçатăп чăвашла.

- Шăппăн партăсем хушшине ларăр.

Фонозарядка (слайд). Ман хыççăн калăр:

***Лăк-лăк, çут çанталăк.***

***Лăх-лăх, тăван таврвлăх.***

***Ăн-ăн-ăн, урок ăн.***

***Ĕн-ĕн-ĕн, ырă шухăш сĕн.***

Паян мĕнле уйăх, миçемĕш число, мĕнле кун иккенне аса илетпĕр. Урамра çулталăкăн хăш вăхăтне, çанталăк мĕнлине каласа хăваратпăр (пуплеве малалла аталантарасси).

**2.Урокăн темипе, тĕллевĕсемпе паллаштарни.**

-Паянхи урок эпиграфĕ: **«Пурăн, çут çанталăк!»** (слайд)

-Ачасем, мĕнле шутлатăр, паянхи урокра мĕн çинчен калаçăпăр-ши?

-Тĕрĕсех шутлатăр. Паянхи урокра эпир çут çанталăк, тăван тавралăх çинчен калаçăпăр. Урок теми: «**Тăван тавралăх - вăл тупра, эс ăна юрат, упра!»**

( Урокăн юхăмĕпе тата тĕллевĕсемпе паллаштарни , слайд)

**-**Урокра 3 ушкăн çине пайланса ĕçлĕпĕр. Кашни ушкăнăн хăйĕн проект тумалла пулать. Тĕрлĕ енлĕ ĕççем пулĕç. Хăш ушкăн маттуртарах ĕçленине сигнал карточкисем тăрăх пĕлĕпĕр. Тĕрĕс хуравсемшĕн жетонсем паратăп. Пурне те ăнăçусем сунатăп.

**II. Тĕп пай.**

**3.Çĕнĕ сăмахсемпе паллашасси** (çĕнĕ сăмахсем экран çинче, ачасем сăмахсене вулаççĕ, куçараççĕ, сăмах майлашăвĕсемпе предложенисем тăваççĕ, сăмахсене словаре çыраççĕ; слайд)

-Çак ĕçсене пурнăçлама пире урокра çак сăмахсене пĕлни кирлĕ.

**4. Укерчĕкпе ĕçлесси** (доска умĕнче укерчĕк тăвасси).

-Халĕ вара ачасем çĕнĕ сăмахсемпе усă курса укерчĕк тăвăпăр. Предложенисенче çак çĕнĕ сăмахсем пулмаллах.

-Ачасем, калăр-ха тархасшăн, тăван тавралăх шутне мĕн-мĕн кĕрет?

(Ачасем хуравласа укерчĕк тăваççĕ).

-Ку укерчĕк мĕне сăнласа парать?

-Кĕçех мĕнле çулталăк вăхăчĕ çитет?

-Çуркунне илемлĕ вăхăт-и?

-Вăл сире мĕншĕн килĕшет?

-Çапла, ачасем, çуркунне илемлĕ вăхăт: кайăксем юрлаççĕ, йывăççем çулçă кăлараççĕ, симĕс курăк тухать. Пĕтĕмĕшле каласан çут çанталăк чĕрĕлет, илемленет. Ачасем, çак илеме упрас тесен, мĕн тумалла-ха? Çакна эпир текст вуласа тухсан пĕлĕпĕр.

-Халĕ вара пурте кĕнекесене уçатпăр (193-мĕш стр.)

**5. Текстпа ĕçлесси.**

а) учитель вулани;

б) ачасем ăшра вуласа содержанине ăнланни;

в) 1ача текст содержанине кĕскен вырăсла каласа пани;

г) ушкăнпа ыйтусем парса ĕçлесси (схема);

| I ушкăн | II ушкăн | III ушкăн |
|---|---|---|
|  |  |  |

**6.Кану саманчĕ.**

(«Çĕмĕрт çеçки çурăлсан та…» юрă юрлани).

**7. Карточкăсемпе ĕçлени.**

-Ачасем тăван тавралăха упрамалли çинчен тепĕр ĕç тăвар-ха. Сирĕн умра тăван тавралăх çинчен предложенисем. Çак предложенисенче сиктерсе хăварнă сăмахсене тĕрĕс лартса предложенисене тетрадь çине çырса хумалла.
-Тетрадьсене уçатпăр, число çыратпăр.

1)Шыв - çут çанталăк ……... 2) Эпир çут çанталăк пурлăхĕпе …… . 3) ……… чухăнланса пырать. 4) Çапла пулать вăл яланах: çĕмĕрме çăмăл, юсама - …… . 5) Çынсем ……… пулăшма тăрăшаççĕ.

***Усă курмалли сăмахсем***: çут çанталăк, пурлăхĕ, йывăр, кайăксене, пурăнатпăр.

**8.Ваттисен сăмахĕсемпе ĕçлени.** (слайд)

- Тăван тавралăха çинчен художниксем те нумай ўкерчĕксем ўкернĕ, поэтсем те сăвăсем çырнă. Халĕ вара ваттисем мĕн каланипе паллашар-ха.

-Мĕнле ăнланатăр?

***Касма çăмăл – устерме йывăр.***

***Вăрман пек пуянни çук, хир пек асли çук.***

***Пĕр йывăç касрăн пулсан икĕ йывăç ларт.***

***Йывăçа лартма часах та, уссине курма часах мар.***

(Вулани, вырăсла куçарни)

**9.Кроссвордпа ĕçлени** (карточкăсем)

-Карточкăсем çинче кроссворд (йывăç ячĕсем пытаннñă). Хăш ушкăн маларах кроссворда тултарать?

**10. Ушкăнăн- ушкăнăн проектсем туни.** Вĕсем валли укерчĕксем, çилĕм, сăрăсем, хут, словарьсемпе кĕнекесем хатĕрлемелле. Ĕçе тума 6-8 минут çитет. (слайдсем)

- Çут çанталăка упрассине мĕнле ăнланни çинчен плакатсем тăвăпăр.

1ушкăн – «Тăван тавралăха упрас!» ятлă плакат тăвать.

2ушкăн – «Сăтăр ан ту!» ятлă плакат тăвать.

3ушкăн – «Вăрман пуянлăхĕ!» ятлă плакат тăвать.

Ачасем ĕçленĕ хушăра слайдсем пулаççĕ, юрă янăрать. Юлашкинчен ачасем проектсене доска умĕнче хутĕлеççĕ.

-Эсир тĕрĕс каларăр, çут çанталăкăн илемĕ тĕрлĕ енлĕ, пур енне те упрамалла.

**III. Урока пĕтĕмлетни.**

- Ачасем, сире паянхи урок килĕшрĕ-и?

- Паян урокра мĕн турăмăр, мĕн çĕннине пĕлтĕр?

**Ачасен ĕçне хаклани.**

-Паянхи урокра эсир пурте тăрăшуллă пултăр, тимлĕ ĕçлерĕр. Килти ĕçе те çаплах туса килессе шанатăп. (Жетонсене шутласа оценкăсене калатăп).

**Киле ĕç пани.**

-Ачасем, килте сирĕн тăван тавралăх çинчен укерчĕк укерсе килмелле.

**Урока вĕçлени.**

***Пĕтĕмлету:*** **Çут çанталăкăн илемне, йывăç-курăкне упрамалла, çĕр çинчен çухалма памалла мар. Çавăнпа та ачасем чечеке те ан татăр, курăка та ан таптăр, йăвасене ан тустарăр, турата ан хуçăр!**(слайд)

-Ачасем эпир сирĕнпе çут çанталăк çинчен вырăсла сăвă вернньĕччĕ, атьăр-ха çав сăвва аса илер.

**Если я сорву цветок,**

**Если ты сорвешь цветок,**

**Если все: и я, и ты.**

**Опустеют все поляны**

**И не будет красоты.**

-Ачасем, паянхи урока манăн  Николай Сандров çырнă сăвă йĕркисемпе вĕçлес килет.

**Эпир çуралнă вырăнсем**

**Ытарма çук хитре.**

**Уя тухсассăн, тăрисем**

**Юрлаççĕ тупере.**

**Тăван çĕре упра, юрат,**

**Тăван çĕре чысла.**

**Вара сан пурăнма юрать,**

**Ĕçле, ташла, юрла! (Н.Сандров)**

-Сывă пулăр ачасем.